Республика кунне ĕçре кĕтсе илеççĕ

# "Мĕн пуррине вăхăтра пуçтарассишĕн тимлетпĕр",–

*терĕç пĕр чĕлхеллĕн Чапаев ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн "симĕс ĕç çире" вăй хуракан ĕçченĕсем*



Николай Волков преслană утă рулонĕсем.



Купари утă та кĕçех управа кĕрĕ.

Хĕвел Анăçĕнчен ирех çумăр пĕлĕчĕсем капланма пуçларĕç пулсан та, Тухăçран çĕкленекен сар хĕвел вара татах шăрăх кун хыпарлать. Çур акиренпех çумăр курман хресчен паян нимрен ытла канлĕ çумăр кĕтет: çанталăк типпе кĕрсе кайса мĕн ĕçленине харама ан ятăрччĕ-çке...

Чапаев ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн кантурĕпе мехпаркĕнче иртенпех халăх хĕвĕшет: пĕрисен курăк çулма тухмалла та утă турттарса кĕмелле, теприсен Етĕрнери аш-какай заводне выльăх илсе каймалла, виççĕмĕшсен унта та кунта юсав ĕçĕсем ирттермелле, выльăхсене улăха кăлармалла. Çапла çав, канăç çук ял çыннин çу кунĕсенче, пĕр пушă вăхăт та тупаймастăн унăнне ку вăхăтра: çур аки, ут çи, вырма, кĕр енне сулăнсан ырана хăварма çук ытти ĕçсем т. ыт. те.



О. Герасимовпа Г. Романовăн ут çире те сӳтсе явмалли пайтах.



Чуманкассинчи вăтам шкул ачисем кăшман çумласа пулăшаççĕ.

Чуманкассисемпе Отарккăсем хыçа юлнă çур акире çуртрисене 440 гектар, пĕр çул ӳсекен курăксене 62 гектар, выльăх кăшманне 10 гектар, "иккĕмĕш çăкăра" 30 гектар акса-лартса хăварчĕç. Паян вĕсене таса пăхса ӳстересси – тĕп тĕллев. Иртнĕ кунсенче хуçалăх çуртрисем çинчи "симĕс пушарпа" кĕрешме пĕтĕм лаптăка майлах гербицидпа пĕрĕхсе тухрĕ, выльăх кăшманĕн пуссисене çумран тасатас ĕçе пуçларĕ. Кунпа пĕрлех хуçалăх ĕçченĕсем çанă тавăрсах выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçе кӳлĕнчĕç.

– Паян мĕнле ĕçлетпĕр – хĕл хырăмĕ çапла тутă пулĕ. Çакна "симĕс ĕç çине" хутшăнакан кашни механизаторах лайăх ăнланать. Ăнланать те иртен пуçласа каçчен улăх-çаранта вăй хурать. Авă çумăр пĕлĕчĕсем курăнма пуçларĕç те хирте выртакан утă рулонĕсене фермăна кĕртсе хурас тесе ĕçе тухатпăр, – тет ĕçе наряд илнĕ 45 çул стажлă 72 çулхи Энгельс Григорьевич Григорьев механизатор хăйне çирĕплетнĕ рулон тиемелли агрегат юсавлăхне тĕрĕсленĕ май. Çулĕсем пур пулин те механизатор хуçалăхри нумай ĕçченшĕн ĕçĕпе тĕслĕх пулса тăрать. Акă çур акире вăл пĕр чăрмавсăр хире вăрлăх кăларса тăнă, акнă анасене 500 гектар пусăрăнтарнă, фермăсене вăхăтра тырă-çăнăх турттарса панă. Ĕçрен ан хăра – вăл хăй санран хăратăр. Çапла пулса тухмасть-им-ха кунта? Хирĕç хурав çук.

Çак вăхăтра хуçалăх ертӳçин В. Морозовăн çăмăл автомашини утă рулонĕсем выртакан çарана васкарĕ. Хуçалăхри ĕç хăрушсăрлăхĕн инженерĕ Олег Сергеевич Захаров та кунтах.

– "Симĕс ĕç çин" тĕп пайне механизациленĕрен ĕç хăрушсăрлăхне тĕрĕслесех тăратпăр, – техника ĕçленине пăхкаласа утать инженер.

– Ĕç условийĕсем кашниншĕнех паллă, топливо çитсе пырать, уяр кунăн пĕр сехетне çухатмасăр ĕçлемелле кăна, – калаçăва хутшăнчĕ хуçалăх ертӳçи Виталий Пименович.

Кооперативăн улăх-çарансăр тата тинтерех акса хăварнă пĕр çул ӳсекен курăксемсĕр пуçне 335 гектар çинче нумай çул ӳсекен курăксем пур. Пĕтĕмĕшле лаптăкпа усă курса хуçалăхăн кăçал çитес хĕл кунĕсем валли 524 тонна утă, 2200 тонна сенаж хатĕрлемелле.

– Çанталăк условийĕсене пула курăксем çĕкленсех çитеймерĕç. Кун пекех пулсан мĕн палăртни туллин пурнăçланасси те шухăшлаттарать. Çакă вара улăхçаранăн кашни тăваткал метрĕпе туллин усă курма ыйтать. Çапла тума тăрăшатпăр та, – терĕ çак самантра пирĕн пата пырса тухнă Геннадий Васильевич Романов тĕп агроном иртнĕ кунсенче виççе панă кăшман пуссине çынсем тухнине тата кунти çумпа кĕрешме Чуманкассинчи вăтам шкул ачисен çуллахи лагерĕ пулăшма пынине палăртса. Çак вăхăтра Энгельс Григорьевич хире пынă тракторсене пĕрин хыççăн теприне Николай Волков преслană утă рулонĕсене тиесе ăсатрĕ. Çаран пушанчĕ. Çумăр пулсан кунта каю пĕр тикĕс çĕкленесси пирки пĕр иккĕленӳ те çук-ха та. Энгельс Григорьевич пирки вара хушса каласа хăварастан 1978 çултах "Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ механизаторĕ" хисеплĕ ят илнĕ. Иртнĕ çулсенче ку чыса çулленех "хир карапĕпе" ĕçлесе хуçалăхра та, районта та палăрса тăракан унăн ĕçтешĕ Николай Емельянович Федоров та тивĕçнĕ.



Е-303 косилка кулленех ĕçре.



Хатĕрленĕ рулонти утă фермăна каять.

– Республикăмăр хăйĕн кунне пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илни пире те савăнтарать, татах та тухăçлăрах ĕçлеме хавхалантарать. Килĕшет мана ку уяв, – терĕ хăйĕнчен уйрăлнă вăхăтра ватă механизатор куçне çумăр пĕлĕчĕсем çинчен илмесĕр.

Председатель машинипе Аксути уйне çитрĕмĕр. Кунта Олег Порфирьевич Герасимов инженер-механик тытса пыракан Е-303 косилка 22 гектар çинче лайăх ӳснĕ люцернăн пысăк лаптăкне çулса та пăрахнă ĕнтĕ. Г. Романов тĕп агроном кунтан утă лайăх тухасси пирки иккĕленмест.

Сăмахăма вĕçлесе Республика кунне хĕрӳ ĕçре кĕтсе илекен Апаш тăрăхсăм килет. Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăхра вăл хастар ĕçпе пуринчен малне тухăçлă ĕç çеç сунас килет. Çапла пултăрччĕ.



Пуян опытлă Энгельс Григорьевич Григорьев "симĕс ĕç çин" кашни саманчĕпех кăмăллă.

**Анатолий БЕЛОВ.**

Йышăну

## Тасалăхпа тирпейлĕхшĕн

ЧР Президенчĕн садсемпе парксен çулталăкĕ тата республикăри чи хăтлă яла палăртассипе çуллен ирттерекен смотр-конкурсĕ çинчен указĕсемпе килĕшӳллĕн район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов июнĕн 19-мĕшĕнче районти чи хăтлă яла, кил хуçалăха палăртассипе çуллен ырă йăлана кĕнĕ смотр-конкурса ирттерессипирки йышăну кăларнă, ăна ирттерме комиссийĕркеленĕ. Комиссие район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, капиталлă строительствăпа архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕ В. Г. Никитин ертсе пырать. Йышăну кăларнипе пĕрлех смотр-конкурсăн положенине çирĕплетнĕ. Смотр-конкурс 4 енпе иртет: чи лайăх ял, тирпейлĕ организаци, чи лайăх социаллă сфера объекчĕ, чи лайăх кил-çурт.

Конкурса тăратнă объектсене хакланă чух тавралăха проектпа килĕштерсе ешĕллентернине, газонсемпе йывăççем тата тĕмсемпе чечексем, кану кĕтесĕсем епле пулнине, территори тирпейлине, урампа кил картисен эстетикине, пĕчĕк архитектура формисене тата ачасен спорт лаптăкĕсене пăхса тăнине, çурт фасачĕсене, ăпăр-тапăра пуçтарасса йĕркеленине шута илеççĕ.

Смотр-конкурс çĕнтерӳçисем укçан çакăн пек премисене тивĕçеççĕ:

а) яла йĕркелентернипе тата унти ешĕллентерӳшĕн 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш вырăнсене тухнисем 10 пин, 7,5 пин, 5 пин тенкĕ;

ă) организаци территорине тирпейлесе хăтлă кĕртнĕшĕн, хăйсен границинче санитарипе хӳтĕлев зонине лайăх пăхса тăнăшăн çĕнтерӳçĕсем 3 пин, 2 пин, 1 пин тенкĕ;

б) социаллă сфера объекчĕсене ешĕллентернĕшĕн, унти чечек тата кану кĕтесĕсене тивĕçлĕ пăхса тăнăшăн мала тухнисем 3 пин, 2 пин, 1 пин тенкĕ;

в) "Чи лайăх кил-çурт" ята çĕнсе илнисем 3 пин, 2 пин, 1 пин тенкĕ.

**ХАМĂР ИНФ.**

Чрезвычайлă лару-тăру комиссийĕн ларăвĕнчен

## Çуллахи лăпкăлăхшăн пĕрле тăрăшмалла

Иртнĕ кунсенче районти чрезвычайлă лару-тăрăва асăрхаттарас тата пĕтерес, пушар хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтерес енĕпе ĕçлекен комиссин ларăвĕ пулса иртнĕ. Унта икĕ ыйту пăхса тухнă: 1) ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн кăçалхи 4-мĕш номерлĕ "2007 çулхи пушар хăрушлăхлĕ сезона хатĕрленесси" Указĕпе, район администрацийĕн пуçлăхĕн 138-мĕш номерлĕ "Çурхи-çуллахи вăхăтра ялсене тата экономика объекчĕсене пушар хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтересси çинчен" постановленийĕпе, чрезвычайлă лару-тăру тата пушар хăрушсăрлăх ыйтăвĕпе ĕçлекен Патшалăх комиссийĕн кăçалхи майăн 28-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн район территоринче пушар хăрушсăрлăхне тивĕçлĕ шайра тытса чрезвычайлă лару-тăруран пăрăнасси; 2) Район администрацийĕн пуçлăхĕн "Районти шывсем çинче çынсене хăрушсăрлăхпа тивĕçтересси çинчен" йышăнăвĕ пурнăçланни çинчен.

Пушар хăрушсăрлăхĕпе калас пулсан ку ыйту халĕ малти ретре тăрать. Пĕлтĕр районта пулнă пушарсенче (49 тĕслĕх) миллионшар тенкĕлĕх пурлăх кĕлленнипе пĕрлех 12 çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнă пулсан, кăçалхи 5 уйăхра пушарсен хисепĕ пĕлтĕрхинчен чакнă пулсан та (2006 çулта – 24 пушар, кăçал – 15), çулăм тыткăнĕнче 6 çын вилнĕ (пĕри 3 çулхи ача). Çак инкекрен эпир пĕрлехи асăрханупа тата пушар хăрушсăрлăх правилисене çирĕп пăхăннипе çеç сыхланма пултаратпăр. Кунта ял тăрăхĕсем халăхпа тĕл пулусем ирттерни, ведомствăлла пушар машинисемпе ялсенче шыв илмелли вырăнсене юсавлă тытни, ăнăçлă мар çемьесемпе ăнлантару калаçăвĕсем ирттерни, ялсенче каçхи хуралсем тăрассине йĕркелени кĕреççĕ.

**ХАМĂР ИНФ.**